Подписан: Петров Александр Олегович
DN: C=RU, OU=Директор, O=" МБОУ ""Чиричкасинская ООШ"" ЦИвильского района", CN=Петров Александр Олегович, E=chirichkasi@mail.ru
Основание: Я являюсь автором этого документа
Местоположение: место подписания
Дата: 2021.09.03 12:45: 24+03'00'

*Приложение*
*к основной образовательной программе*
*начального общего образования в новой редакции,*
*утвержденной приказом*
*директора МБОУ «Чиричкасинская ООШ»*
*от 30 августа 2021 г. № 69б*

# РАБОЧАЯ ПРОГРАММА

начального общего образования

***по чувашскому языку***
составлена
группой учителей начальных классов
МБОУ «Чиричкасинская ООШ»:

***Евдокимовой Надеждой Витальевной,***
***Никифоровой Реной Александровной,***
***Ивановой Валентиной Васильевной,***
***Васильевой Людмилой Герасимовной.***

Срок реализации: 4 года

# Ăнлантарса пани

Ку ĕç программине федераллă патшалăх шайĕнче йышăннă çĕнĕ вĕрентӳ стандарчĕпе килĕшӳллĕн, «Тăван чĕлхепе литература вулавĕн тĕслĕх программисем: чăваш шкулĕн 1-4 классем валли М.К. Волков, Л.П. Сергеев, Т.В. Артемьева, О.И. Печников, А.Р. Кульева – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательство центрĕ, 2013, (1-4 классем валли) тĕпе хурса хатĕрленĕ.

**Программăн тĕллевĕсемпе задачисем:**

- вĕренекенсен çынлăх туйăмĕсене вăйлатма, пурнăçа юратма, ырра шанса тăма тата хăйсене те ырă кăмăллă, сăпайлă пулма хăнăхтармалла;

-ачасем таврари пурнăç, этемпе çут çанталăк çинчен мĕн пĕлнине анлăлатмалла;

-ачасен çыхăнуллă тата сăнарлă шухшлавĕпе асне, асăмлас хевтине аталантармалла;

- вĕренӳ ĕç-хĕлне лайăхрах хăнăхтарса, унан ăслайăсене «алла илме» май памалла;

-вĕренӳ вăхăчĕпе перекетлĕ усă курма, харпр хăй тĕллĕн ĕçлессин ансатрах мелĕсене чухлама вĕрентмелле;

-тăрăшуллă та тимлĕ вĕренме, кĕнекепе кăсăкланма хăнахтармалла.

Пуплеве пур енлĕн аталантарасси вулас, çырас, çыхăнуллă калаçас, тăнласа ăнланас мехелсене куллен вăйлатни çинче никĕсленсе тăрать. Шăп çавăнпа ĕнтĕ тăван чĕлхе урокĕсенче çыхăнуллă текстпа ĕçлесси тĕп вырăнта пулмалла. Ачасем ăна вуласа е тăнласа ун тăрăх калаçаççĕ, хăйсем текст хайлаççĕ, çыру хăнăхтарăвĕсем пурнăçлаççĕ.

Пуплеве аталантармалли тепĕр ăслай — ачасем тăван чĕлхери морфологи мелĕсемпе, урăхла каласан, сăмахсен тĕрлĕ формипе усă курма пĕлнине куллен лайăхлатасси.

Пуплеве аталантарассин виççĕмĕш ене вăл — ачасене пуплеве тииткерме хăнăхтарни, урăхла каласан, чĕлхе тишкерĕвне вĕрентни. Ку вăл пуплеве фонетикăпа графика. орфографипе пунктуаци, морфологипе синтаксис, сăмах тытăмĕпе сăмах пулăвĕ енчен ансаттăн тишкерессипе çыхăнать.

**Учебниксем:**

1. Чăваш азбуки. 1-мĕш класс валли. Ермошкина А.А., Чернова Н.Н..- Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви.
2. Чăваш чĕлхи. Вĕренӳ пособийĕ: Иккĕмĕш класс валли/ Л.П.Сергеев, Т.В. Артемьева, А.Р Кульева.- Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви.
3. Чăваш чĕлхи. Вĕренӳ пособийĕ: Виççĕмĕш класс валли/ Л.П.Сергеев, Т.В. Артемьева, А.Р Кульева.- Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви.
4. Чăваш чĕлхи. Вĕренӳ пособийĕ: Тăваттăмĕш класс валли/ Ю.М. Виноградов, А.Р Кульева.- Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви.

**Вĕренекенсене кирлĕ пособисем:**

1. Чернова Н.Н. Çыру тетрачĕ, 1-4 пайĕсем.- Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви.
2. Фĕдорова А.Р., Кульев О. Ĕç тетрачĕ. 2-4 классем вали.- Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви.

**Вĕрентекен валли  кирлĕ пособисем:**


1. Молоствова В.Г., Данилова А.Н. Чăваш чĕлхи- тăван чĕлхе. Хăнăхтарусем. Диктантсем. 1-2 классем валли.- Шупашкар, 2019.
2. Артемьева Т.В., Печников О.И. Изложени тексчĕсен пуххи. 1-4 влассем валли.- Шупашкар, 2006.
3. Дмитриева Э.Ф., Эверскова Т.Г. Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. - Шупашкар, кĕнеке издательстви, 2001.
4. Сидорова А.М., Баринова К.П. Диктант тексчĕсен пуххи.- Шупашкар, кĕнеке издательстви.


**Электронлā ресурссем:**

1. **Предшкольная подготовка**
2. **Электронное пособие для подготовки дошкольников к занятиям в школе на чувашском языке**
3. **Электронный букварь на чувашском языке для 1 класса**
4. **Электронное пособие к учебнику чувашского языка для 2 класса**
5. **Электронное пособие к учебнику чувашского языка для 3 класса**
6. **Электронное пособие к учебнику чувашского языка для 4 класса**
7. **Дошкольник**
8. **Каталог книг**
9. **Букварь 1 класс.**
10. **Чувашский язык. 2 класс**
11. **Тестер**
12. **Саспалли хули**
13. **Окружающий мир(чувашский)**
14. **Электронное пособие по технологии для 1-4 классов «В волшебном мире народного творчества»**

**https://salikovo.chuvash.org/nachalka/**

**Кĕтекен результатсем:**

Тăван чĕлхе вĕрентесси виçĕ пайран тăрать: 1) вулама-çырма вĕрентесси; 2) пуплев ĕç-хĕлĕсене (вулав, çыру, калу, итлев) вĕрентесси; 3) пуплеве пур енлĕн аталантарнă май чĕлхе пулăмĕсемпе ансат паллаштарасси, пуплеве тишкерме вĕрентесси. Çак виçĕ пая пуплеве аталантарас тĕллев пĕрлештерсе тăрать. Çапла вара, тăван сăмахлăха вĕрентни кирлĕрен те кирлĕ ăслайсемпе хăнăхусене аталантарса çирĕплетессипе тӳррĕнех çытхăнмалла. Çав ăслайсемпе хăнăхусем шутĕнче — ăнланса вуласси тата тăнласси, çыхăнуллă калаçасси, çырасси. Çавăнпа пĕрлех ачасене чĕлхе ăслăлăхĕпе литература пĕлĕвĕн ансат ăнлавĕсемпе, литературăпа сăмахлăх ӳнерĕ пек паллаштарнă май вĕсен харпăр хăйĕн тата юлташĕсен пуплевне сăнас, чĕлхе илемне туйса ăна тарăнрах пĕлес туртăмне амалантармалла. Пĕтĕм халăх усă куракан литература чĕлхин сасă тытăмĕпе, сăмах пуянлăхĕпе, морфологи тата синтаксис мелĕсемпе паллаштарнă хушăрах вĕсене вырăнти калаçу уйрăмлăхĕсене курма та вĕрентмелле.

Ача пуплевĕнчи тĕп ĕç-хĕлсене (тăнлассине, калаçассине, вулассине, çырассине) аталантарса пынипе пĕрлех тăван чĕлхе вĕрентнĕ чух пуçламăш шкулта çакăн пек пысăк та пархатарлă тĕллевсене пурнăçламалла:

- вĕренекенсен çынлăх туйăмĕсене вăйлатмалла, пурнăçа юратма, ырра шанса тăма тата хайсене те ырă кăмăллă, сăпайлă пулмахăнăхтармалла;
- ачасем таврари пурнăç, этемпе çут çанталăк çинчен мĕн пĕлнине анлăлатмалла;
- ачасен çыхăнуллă тата сăнарлă шухăшлавĕпе асне, асамлас хевтине аталантармалла;
- вĕренӳ ĕç-хĕлне лайăхрах хăнăхтарса, унăн ăслайĕсене «алла илме» май памалла; вĕренӳ вăхăчĕпе перекетле усă курма, харпăр хăй тĕллĕн ĕçлессин ансатрах мелесене чухлама вĕрентмелле;

— тăрăшуллă та тимлĕ вĕренме, кĕнекепе кăсăкланма хăнăхтармалла.

Программăри вĕренӳ материалĕпе вĕрентӳ меслечĕсем ачасене çирĕп пĕлӳпе ăслайсем, кирлĕ хăнăхусем пурнăçлаччăр тесен дидактикăн тĕп принципĕсене асра тытса вĕренӳ ăнланулăхĕпе кăсăклăхне, çыхăнулăхĕпе тĕллевлĕхне ялан пурнăçласа пымалла.

Ачасенчен кĕтекен результатсем.

Пуплеве пур енлн аталантарнă май чĕлхене ансат тишкерме, терминсемпе усă курма вĕрентесси

Предметăн пайрам результачĕсем:

- ачасем алфавитри сас паллисене, вĕсен пĕлтерĕшĕсене, уçă тата хупă сасăсен уйрăмлăхĕсене, сăмахри уçă сасă çине пусăм ӳкни-ӳкменнине, сасăсем хытă тата çемçе пулнине, сăмахсене пĕр йĕркерен теприне мĕнле куçармаллине пĕлни;
- 35-40 сăмахлă текста каллиграфи тĕлĕшĕнчен тĕрĕс те таса, сас паллисене сиктерсе хăвармасăр, пăтраштармасăр пăхса çырни;
- 25-30 сăмахлă текста итленипе (диктант) çырма пĕлни;
- сăмаха сыпăклама, пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене тĕрĕс куçарма;
- çемçе хупă сасăсене çырура тĕрĕс палăртма, вăрăм хупă сасăллă сăмахсене (программăра кăтартнисене) тĕрĕс çырни;
- çын ячĕпе хушаматне, ашшĕ ятне, выльăхсемпе чĕр чунсен уйрăм ячĕсене, хула, ял, урам, юханшыв ячĕсене пысăк сас паллипе пуçласа çырма пултарни;
- сăмахсен сасă тытăмне тишкерме (вĕсене сыпăклама, уçă тата хупă сасăсене, сасăсемпе сас паллисен йĕркине тата хисепне палăртма) пĕлни;
- япалана, унăн ĕçне, паллине пĕлтерекен сăмахсене ыйтăвĕ тăрăх ушкăнлама-пултарни;
- предложенин тĕп членĕсене – подлежащипе сказуемăя – тупма пĕлни;

- ыйтусем тăрăх ансат предложени членĕсем хушшинчи çыхăнăва палăртма вĕренни;
- предложение пысăк сас паллирен пуçласа çырма, ун вĕçне, интонацие кура, пăнчă, ыйту е кăшкăру палли лартма пĕлни;
30-45 сăмахлă текст тăрăх ыйтусене хуравласа изложени çырма;
2-3 предложениллĕ текст тума пултарни.

Харкамлăх результачĕсем
- тăван чĕлхене хаклама, хисеплеме хăнăхса пыни;
- кашни халăхăн хăйĕн чĕлхи, вăл ыттисенчен уйрăлса тăнине ăнланни;
- чĕлхепе кăсăкланма пуçлани, харпăр хăй пуплевне лайăхлатас кăм*ăл*-туйăм амаланни

Пур предмета та вĕрентнĕ май кĕтекен результатсем:
- пулăмсене тарăнрах ăнланма вĕренсе пыни
- ăнлавсене уçăмлама, ушкăнлама хăнăхса пыни
- тишкерӳ-пĕтĕçтерӳ, танлаштару хăнхĕвĕсем çирĕпленсе пыни
Предметăн пулас результачĕсем
Пĕлӳлĕх(познавательные) результачĕсем:
- çырнă чух мĕнле лармаллине тата çыру хатĕрĕсемпе мĕнле усă курмаллине пĕлни;
- таврари япаласене, пулăмсене тĕпчес ăнтăлав аталанни;
- таврари япаласемпе пулăмсем çинчен мĕн пĕлнине системăлани: «Тăван çĕр-шыв» ăнлава уçăмлани. Вăл çуралнă вырăн, тăван ял, тавралăх, хăй пурăнакан республика тата çĕр-шыв (Раççей) пулнине ăнланни, унăн культури, мухтавлă çыннисем çинчен пĕлни; çут çанталăк законĕсем, япаласемпе пулăмсем пĕр-пĕринпе çыхăнса аталаннине курни;
- тавралăх енĕсене, япалан вырăнне кăтартма, тавралăхри вырăнне палăртма пĕлни;
- япаласен пĕрпеклĕхне, уйрăмлăхне, вĕсем мĕнпе уйрăлса тăнине курма, палăртма пултарайни;
- ачан тавракурăмĕ анлăланни, çут çанталăкри пулăмсем, çулталăк вăхăчĕсем, çемье, чĕр чунсем, ачасен пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ çинчен тĕплĕнрех пĕлни, тĕнче курăмĕ йĕркеленсе пыни;
- туйăм культури çивĕчленни, кирлĕ вăхăтра пулăшма, мĕн тумалла, мĕнле тумаллине тавçăра пуçлани;
-пысăк, пĕчĕк, тан уçлăха курни, логикăллă шайлаштарайни;
- вĕренӳ хатĕрĕсенче кирлĕ материала шыраса тупма пĕлни;
- вĕренӳ хатĕрĕсенче панă символсене, модельсене, схемăсене,паллăсене ăнланни;
Йĕркелӳ-хаклав(регулятивные) результачĕсем:
- тантăшĕсен тата харпăр хăй ĕçне тищкерейни тата пахалайни;
- тишкерӳ - пĕтĕçтерӳ ĕçне хăнăхни, пĕтĕмĕшлине пайсем çине уйăрма, пайĕсене пĕтĕçтерме пĕлни;
- тĕрĕс курма, япаласен уçлăхри вырăнне палăртма пултарни;
- хăйĕн ĕçне вĕрентекен, юлташĕсем хакланине йышăнни;
- вĕрентекен, класпа пĕрле палăртнă задачăна татса памалли тĕрлĕ майсем тупни;
- хăвăн шухăшна ăнлантарса парайни;
- йăнăша курма, пĕр-пĕрне йăнăш тăвасран асăрхаттарма вĕренни;
- ĕç йĕркине, мĕн хыççăн мĕн тумаллине, мĕншĕн ун пек тумаллине тавçăрни;
- ĕçĕн кашни тапхăрне вĕрентекен пулăшнипе хак парса пырайни;
- харпăр хăй ĕçне планлама пĕлни.
Хутшăну(коммуникативные) результачĕсем:
- шухăша тĕрĕс те уçăмлă, çыхăнуллă каласа пама тăрăшни;
- текстпа ĕçлеме пĕлни, вулани çинчен çыхăнуллă тата уçăмлă каласа пама тăрăшни;
- ачан пуплевĕ, йăнăша курма, пĕр-пĕрне йăнăш тăвасран асăрхаттарма вĕренни;

-пуплев культури аталанни: пĕр-пĕр япала, пулăм, ĕç çинчен çыхăнуллă, кирлĕ сăмахсемпе усă курса каласа пама пултарни; юлташпа, аслисемпе, ваттисемпе мĕн çинчен тата мĕнле сăмахсемпе усă курса калаçмаллине ăнкарни, кампа калаçнă чух, хăçан, мĕнле сăмахсемпе (сывлăх сунни, тав туни, сывпулашни) усă курмаллине тавçăрни;
- çывăх, хирĕçле, пĕр пĕлтерĕшлĕ, нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсен пĕлтерĕшĕсене тĕрĕсрех, танăнрах ăнланни, вĕсен ретĕнче кирлине суйлайни;
- сăмахсен куçăмлă пĕлтерĕшне ăнланни;
- чăваш чĕлхинче сăмахсен предложенире çирĕп йĕрке пуррине ăнланни, ăна пуплевре тытса пырайни;
- каласа парассин тĕрлĕ тĕсĕсене (калав, сăнлав, уйлав) пĕлни. Вĕсен тытăмĕпе уйрăмлăхĕсене курма, калавăн тĕрлĕ тĕсне йĕркелеме пултарайни;
- калав темине, тĕп шухăшне палăртайни;
- хутшăну пуплев\ (диалог) тытăмне, унти предложенисен хăй евĕрлĕхне (ытларах тулли мар предложенисем) пĕлни. Диалог шалашĕ пĕр темăна, пĕр тĕп шухăша пăхăнса тăнине ăнланни. Майĕпен хутшăну пуплевне тĕрлĕ пуплев ситуацийĕсенче усă курма пултарни;
- ушкăнпа ĕçлеме пĕлни;
- сăмах йышĕ пуянланни;
- çынсем тĕрлĕрен шухăшлама пултарнине ăнланни.
Ача пуплевĕнчи тĕп ĕç-хĕлсене( тăнлассине, калаçассине, вулассине, çырассине) аталантарса пынипе пĕрлех тăван чĕлхе вĕрентнĕ чух çак тĕллевсене пурнăçламалла:
Вĕрентекенсен çынлăх туйăмĕсене вăйлатмалла, пурнăçа юратма, ырра шанса тăма тата хăйсене те ырă кăмăллă, сăпайлă пулма хăнăхтармалла;
Ачасем таврари пурнăç, этемпе çут çанталăк çинчен мĕн пĕлнине анлăлатмалла;
Ачасен çыхăнуллă тата сăнарлă шухăшлăвĕпе асне, асăмлас хевтине аталантармалла;
Вĕренӳ ĕç-хĕлне лайăхрах хăнăхтарса, унăн ăслайĕсене «алла илме» май туса памалла; вĕренӳ вăхăчĕпе перекетлĕ усă курма, харпăр хăй тĕллĕн ĕçлессин ансатрах мелĕсене чухлама вĕрентмелле;
Тăрăшуллă та тимлĕ вĕренме, пĕлӳпе пурнăç тĕслĕхĕсен çăл куçĕпе – кĕнекепе кăсăкланма хăнăхтармалла.

## ВУЛАМА-ÇЫРМА ВĔРЕНТЕССИ ХАТĔРЛЕВ ТАПХĂРĔН:

***Харкамлăх результачĕсем:***

- ачасем шкул ачи яваплăхĕсемпе малалла паллашса, вĕсене пурнăçлама хăнăхса пыни;
- аслисем ертсе пынипе ушкăнра ĕçлеме вĕренсе пыни;
- харпăр хăй хăтланăвĕсене сăнама-асăрхама, вĕсемшĕн яваплă пулма хăнăхса пыни;
- харпăр хăй сывлăхне сыхлама, çирĕплетме вĕренсе пыни;
- ачасен ăслав тата хайлав пултарулăхĕ амаланни;
- тантăшĕсен хуравĕсене, каласа панисене ырă кăмăлпа итлеме- тимлеме хăнăхса пыни.

***Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:***

- ачасем вĕренӳ ĕç-хĕлне хăнăхса, вĕренӳ задачисене ăнланма вĕренсе пыни;
- тишкерӳре схемăсемпе, ятарлă паллăсемпе, хатĕрсемпе усă курма вĕренни;
- тимлесе итлеме, ăнланма, ыйтусене уçăмлăн хуравлама, шухăша тĕрлĕрен палăртма, пуплевре предложенин тĕрлĕ тĕсĕпе усă курма хăнăхса пыни.

***Предметăн пайрамлă результачĕсем:***

- чăваш чĕлхинчи тĕп сасăсемпе, вĕсен сас паллийĕсемпе паллашни, сыпăкăн сыпăнтарса вулама вĕренни;
- сас паллисене тĕрĕс çырма, çыхăнтарма, ал çырăвлĕ, пичетлĕ сăмахсене, предложенисене, ансат текстсене çырса илме, каланă тăрăх çырма вĕренни;

- çыру тата вулав правилисемпе паллашни;
- вулав пахалăхĕсем (тĕрĕслĕх, ăнланулăх, палăртулăх, такăнмасăр вулани) аталанса пыни;

-пуплев хăнăхăвĕсем аталанса пыни.

Пĕтĕмĕшле илсен, букварь хыççăнхи тапхăр вĕçне çакăн пек результатсем кĕтме пулать:

***Харкамлăх результачĕсем:***

- пуплев этикечĕн ансат ăслайĕсене харпăрлани;
- хутшăну пуплев ăслайĕсене (калаçу пуçлама, калаçăва тытса пыма, вĕçлеме) мăшăршарăн тата ушкăнпа калаçăва хутшăнма, пит-куç, алă, кĕлетке хусканăвĕсене тĕрĕс усă курма вĕренсе пыни;
- Тăван çĕр-шыв, тăван халăх, тăван чĕлхе ăнлавсене уçăмлани, хăйсем хăш халăх çынни пулнине ăнланса пыни; тăван халăх историне, йăли-йĕркине тарăнрах пĕлес туйăм вăранни;
- тăван тавралăха, çут çанталăка сăнама хăнăхни, ăна упрас, унпа киленес, хăйсем те ун тĕпренчĕкĕ пулнине ăнланас туйăм çурални;

— япаласемпе пулăмсене, çынсем тата харпăр хăй хăтланăвĕсене сăнама, хак пама вĕренсе пыни.

***Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:***

— итлев хăнăхăвĕсем çивĕчленни, тĕллевлĕ итлеме, илтнине хак пама, ас туса асăмлама вĕренсе пыни;

- тĕрлĕ жанрлă хайлавсене лартнă задачăсене кура ăнланса вулама вĕренсе пыни;

— уйлас, сăлтавлас, пĕтĕмлетес ăслайсене харпăрлама пуçлани;

- харпăр хăй шухăшĕсене çыхăнуллă палăртма, сăлтавласа çирĕплетме вĕренсе пыни;

— ачасен ăслас, хайлас пултарулăхĕ амаланни.

***Предметăн пайрамлă результачĕсем:***

—вулав ăслайĕ çирĕпленни, вулав пахалăхĕсем лайăхланни,çыхăнулăхĕ тарăнланни;

—вулав мелĕсене, тĕсĕсене вĕренсе пыни;

- текстпа ĕçлеме, вĕсене тишкерме вĕренни;

—каланă тăрăх çырас пултарулăхĕ амаланни;

—вулани, ӳкерчĕк тăрăх ыйтусене çырса хуравлама вĕренсе пыни;

—курни-илтни, ӳкерчĕк тăрăх, вуланă хайлавсен содержанине асăмласа каласа пама вĕренсе пыни;

- ăславлă каласа пама вĕренсе пыни.

**АЧАСЕНЧЕН 2-мĕш КЛАСРАН ВĔРЕНСЕ ТУХНĂ ТĔЛЕ КĔТЕКЕН РЕЗУЛЬТАТСЕМ**

**Пуплеве пур енлĕн аталантарнă май чĕлхене ансат тишкерме, терминсемпе усă курма вĕрентесси**

*Харкамлăх результачĕсем:*

- тăван чĕлхене хаклама, хисеплеме хăнăхса пыни;
- кашни халăхăн хăйĕн чĕлхи пулнине, вăл ыттисенчен уйрăлса тăнине ăнланни;

— чĕлхепе кăсăкланма пуçлани, харпăр хăй пуплевне лайăхлатас кăмăл-туйăм амаланни.

*Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:*

— пулăмсене тарăнрах ăнланма вĕренсе пыни;

- ăнлавсене уçăмлама, ушкăнлама хăнăхса пыни;

- тишкерӳ-пӗтӗçтерӳ, танлаштару хӑнӑхӑвӗсем çирӗпленсе пыни.

*Предметӑн пайрам результачӗсем:*

- ачасем алфавитри сас паллисене, вӗсен пӗлтерӗшӗсене, уçӑ тата хупӑ сасӑсен уйрӑмлӑхӗсене, сӑмахри уçӑ сасӑ çине пусӑм ӳкни-ӳкменнине, сасӑсем хытӑ тата çемçе пулнине, сӑмахсене пӗр йӗркерен теприне мӗнле куçармаллине пӗлни;

-35-40 сӑмахлӑ текста каллиграфи тӗлӗшӗнчен тӗрӗс те таса, сас паллисене сиктерсе хӑвармасӑр, пӑтраштармасӑр пӑхса çырма пултарни;

-25-30 сӑмахлӑ текста итленипе (диктант) çырма вӗренсе пыни;

- сӑмаха сыпӑклама, пӗр йӗркерен тепӗр йӗркене тӗрӗс куçарма, çемçе хупӑ сасӑсене çырура тӗрӗс палӑртма, вӑрӑм хупӑ сасӑллӑ сӑмахсене (программӑра кӑтартнисене) тӗрӗс çырни;

- çын ячӗпе хушаматне, ашшӗ ятне, выльӑхсемпе чӗр чунсен уйрӑм ячӗсене, хула, ял, урам, юхан шыв ячӗсене пысӑк сас паллипе пуçласа çырма пултарни;

— сӑмахсен сасӑ тытӑмне тишкерме (вӗсене сыпӑклама, уçӑ тата хупӑ сасӑсене, сасӑсемпе сас паллисен йӗркине тата хисепне палӑртма) пӗлни;

- япалана, унӑн ӗçне, паллине пӗлтерекен сӑмахсене ыйтӑвӗ тӑрӑх ушкӑнлама пултарни;

- предложенин тӗп членӗсене - подлежащипе сказуемӑя - тупма пӗлни;

- ыйтусем тӑрӑх ансат предложени членӗсем хушшинчи çыхӑнӑва палӑртма вӗренни;

- предложение пысӑк сас паллирен пуçласа çырма, ун вӗçне, интонаци кура, пӑнчӑ, ыйту е кӑшкӑру палли лартма пӗлни;

- 30-45 сӑмахлӑ текст тӑрӑх ыйтусене хуравласа изложени çырма; 2-3 предложениллӗ текст

## АЧАСЕНЧЕН 3-МӖШ КЛАСРАН ВӖРЕНСЕ ТУХНӐ ТӖЛЕ КӖТЕКЕН РЕЗУЛЬТАТСЕМ

**Пуплеве пур енлӗн аталантарнӑ май чӗлхене ансат тишкерме, терминсемпе усӑ курма вӗрентесси**

***Харкамлӑх результачӗсем:***

- ачасен тӑван чӗлхене тӗплӗнрех вӗренес, харкамӑн пуплев ӗç-хӗлӗсене аталантарас кӑмӑлӗ амаланни;
- тантӑшӗсен тата харкам пуплевне сӑнама, тӗрӗслеме вӗренсе пыни;
- тӑван чӗлхе пуянлӑхӗпе, илемӗпе киленме пуçлани.

***Предметсен пӗрлӗхлӗрезулытачӗсем:***

- тӗрлӗ текста тишкерме, тӳрлетме вӗренсе пыни;
- пуплев культурин енӗсене тимлеме хӑнӑхса пыни;

-калура тата çырура пуплев тата хутшӑну этикечӗн нормисене тытса пыма хӑнӑхса пыни;

-урокра тата тулашӗнче харпӑр хӑй ӗçне йӗркелеме вӗренсе пыни.

***Предметӑн пайрам результачӗсем:***

- сӑмахӑн тӗп пайӗсем — унӑн тымарӗпе аффиксӗсем; пуплев пайӗсем — япала ячӗ, глагол, паллӑ ячӗ; предложенин тӗп (подлежащи, сказуемӑй) тата кӗçӗн членӗсем пулнине пӗлни;
- вӗреннӗ орфограммӑсенчен тӑракан 40-45 сӑмахлӑ текста таса, тӗрӗс те илемлӗ çырса илме, итленипе (диктант) çырма, предложенисем вӗçӗнче кирлӗ чарӑну (пӑнчӑ, ыйту е кӑшкӑру) палли лартма пултарни;

— сăмахсен сасă тытăмне сăнама: сыпăксене уйăрма, уçă тата хупă сасăсене палăртма, уçă сасă çине пусăм ўкни-ўкменнине пĕлме, хупă сасă хытти-çемçине, янăравлă-янăравсăррине туйма, сăмахри сасăпа сас палли хисепне уяма хăнăхса пыни;
- сăмах тытăмне (тымарĕпе аффиксне) курма пултарни;
- пуплев пайĕсене (япала ячĕ, глагол, паллă ячĕ) палăртма, вĕсем мĕнле формăрине (япала ячĕсен хисепне, глаголсен вăхăчĕпе хисепне) чухлани;
- предложенири сăмахсен çыхăнăвне асăрхани, сăмах майлашăвĕсене уйăрни;
- предложени тытăмне (синтаксисне) ансат тишкерме (вăл калуллă, ыйтуллă е хистевлĕ, кăшкăруллă е кăшкăрусăр пулнине палăртма, унăн тĕп тата кĕçĕн членĕсене, вĕсем хушшинчи çыхăнăва ыйту лартса тупма) пĕлни;
- ушкăнпа тунă е хатĕр планпа усă курса 55-65 сăмахлă изложени çырма вĕренсе çитни. тума пултарни.

## АЧАСЕНЧЕН 4-МĔШ КЛАСРАН ВĔРЕНСЕ ТУХНĂ ТĔЛЕ КĔТЕКЕН РЕЗУЛЬТАТСЕМ

**Пуплеве пур енлĕн аталантарнă май чĕлхене ансат тишкерме, терминсемпе усă курма вĕрентесси**

***Харкамлăх результачĕсем :***

- таса, тĕрĕс, вырăнлă пуплев çыннăн сапăрлăх тата пĕтĕмĕшле аталанăвĕн палăрăмĕ пулнине ăнланни;
- чĕлхепе тирпейлĕ, тĕрĕс усă курма вĕренес кăмăлĕсем çирĕпленни;
- хутшăну культурин правилисемпе килĕшўллĕн вăхăтра тав тума, каçару ыйтма, саламлама, вашават сăмах хушма, япала ыйтса илме, чĕнĕве палăртма пĕлни;
- чĕлхе харкам ăславлă пултарулăхне, шухăш вĕçевне палăртмалли, аталантармалли хатĕр пулнине ăнланни.

***Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:***

- чĕлхе тĕп хутшăну хатĕрĕ, наци культурин единици, вĕренў тата аталану хатĕрĕ пулнине ăса хуни;
- чĕлхен тĕрлĕ çăл куçсенче кирлĕ тивĕçлĕ информаци тупма, ăнăçлă усă курма хăнăхса пыни;
- чĕлхе хатĕрĕсемпе хутшăну тата вĕренў задачисемпе шайлашуллă тивĕçлĕ усă курма вĕренсе пыни.

***Предметăн пайрам результачĕсем :***

— вĕреннĕ пуплев пайĕсем, вĕсен паллисем, предложенин пĕр йышши членĕсем çинчен çирĕп пĕлни;
- вĕреннĕ орфограммăсенчен тăракан 55-60 сăмахлă текста йăнăшсăр, таса та илемлĕ çырса илме, диктант çырма пултарни;
- пĕр йышши членлă предложенире (вĕреннĕ тĕслĕхсем) чарăну паллисем лартма вĕренни;
- сăмахăн сасăпа сас палли тытăмне тишкерме, тымарĕпе аффиксĕсене тупма хăнăхни;
- япала ячĕсен, сăпат ылмашĕсен падежĕпе хисепне, глаголсен хисепне, сăпачĕпе вăхăтне палăртма пултарни;

— предложенин ансат синтаксис тытăмне чухлама: вăл тĕллевпе интонаци тĕлĕшĕнчен мĕнлине калама, унăн тĕп членĕсемпе кĕçĕн членĕсене тупма, ыйтусем тăрăх вĕсен çыхăнăвне тата пĕр йышши членсене асăрхама хăнăхса пыни;

- харпăр хăй тĕллĕн тунă планпа усă курса 80-90 сăмахлă текст тăрăх изложени çырма, пурнăçра пулни-иртни, экскурсире курни, сăнани çинчен çыхăнуллă пĕчĕк калав йĕркелеме (сочинени çырма) вĕренсе пыни.

**Предметăн шалашĕ (содержанийĕ)**

**I КЛАСС (165 сехет)**

**ВУЛАМА - ÇЫРМА ВĔРЕНТЕССИ, ПУПЛЕВЕ АТАЛАНТАРАССИ, ЛИТЕРАТУРА ВУЛАВĔ, КЛАСС ТУЛАШĔНЧИ ВУЛАВ**

Вулама-çырма вĕрентесси икĕ тапхăра уйрăлать: пĕри - хатĕрлев тапхарĕ, тепри - саспаллисемпе паллаштарнă тапхăр.

Вулама-çырма вĕрентмелли тĕп меслет – тишкерӳ-¬ пĕрлештерӳ меслечĕ. Шкул ачисене вĕрентнĕ чух унпа туллин усă курмалла.

Литература вулавĕ. Пĕрремĕш çур çулта, ачасен вулав хăнăхăвĕсем йĕркеленсе çитиччен, букварь умĕнхи тапхăрта тата букварь урокĕсенче эрнере пĕрре 15-20 минут литература итлевĕ ирттермелле. Иккĕмĕш çур çулта эрнере пĕрре литература вулав урокĕ пулмалла. Ку уроксен тĕп тĕллевĕ - ачасене тăван çырулăхăн иксĕлми пуянлăхĕпе паллаштарасси, илемлĕ литература хайлавĕсемпе кăсăклантарса ярасси, сăмах искусствипе чунтан киленме, ăна ăнланма вĕрентсе пырасси, вĕсен ăнлав пултарулăхне амалантарасси.

Класс тулашĕнчи вулав урокĕсенче ачасене кĕнекепе интереслентермелле, хăйсем тĕллĕн вулама хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлемелле. Ача-пăча кĕнекисене пăхасси, унти хайлавсене вуласси, итлесси çак уроксенчи тĕп ĕçсем пулмалла.

**ХАТĔРЛЕВ ТАПХĂРĔ (12 сехет)**

Хăнăхтарусем пурнаçланă май терминсемпе (пуплев, текст, калав, предложени, сăмах, сыпăк, пусăм, уçă сасă, хупă сасă) паллаштарасси, вĕсемпе вĕренӳре усă курма хăнăхтарасси.

**Пуплев** (калаçупа çыру) çинчен пĕтĕмĕшле ăнлав парасси.

**Предложени тата сăмах.** Пуплеври (текстри, калаври) предложенисене, предложенири сăмахсене уйăрса илесси, вĕсене фишкăсемпе усă курса палăртасси. Предложени сăмахсенчен тăни. Предложенин пуçламăшĕ тата вĕçĕ. Чарăну паллисем (пăнчă, хӳреллĕ пăнчă, ыйту палли, кăшкăру палли), вĕсен ячĕсемпе паллаштарасси. Сăмах сасăсенчен тăни, унăн пĕлтерĕшĕ пурри.

**С ы п ă к , п у с ă м** . Сăмахсене сыпăкăн пайласси (сыпăкласси). Сăмахсенче сыпăксен шутне, йĕркине палăртасси. Пусăмлă тата пусăмсăр сыпăксене асăрхасси, сăмаха тĕрĕс пусăмласа (пусăм ӳкекен сыпăка тăсарах, вăйлăрах) каласси.

**Сасă**. Пĕтĕмĕшле ăнлантарасси. Сăмахри сасăсене уйăрасси, фишкăсемпе усă курса вĕсен хисепне, йĕркине палăртасси.

Каланă сасăллă сăмаха ыттисем хушшинче палласси, хатĕр схемăна тивĕçтерекен, пĕр-пĕр сасăран е сыпăкран пуçланакан сăмахсене аса илесси. Уçă тата хупă сасăсене илтесси, пĕр-пĕринчен уйăрса илесси.

**Çыру хăнăхтарăвĕсем**. Çырнă чух тĕрĕс ларма, тетраде кирлĕ пек хума, кăранташпа ручкăна меллĕн тытма, ӳкерчĕксем тунă е çырнă чух вĕсемпе тĕрĕс усă курма вĕрентесси.

Пирĕн çырăвăн хăйевĕрлĕхĕ: эпир ытти чылай халăх пек сулахайран сылтăмалла йĕркен-йĕркен çӳлтен аялалла çыратпăр.

Çырулăхра усă куракан хăш-пĕр капăшсен ячĕсемпе паллаштарасси: виçкĕтеслĕх, тӳркĕтеслĕх, çаврашка, ункă, çур ункă, пĕкĕ, çекĕл, лапчăк , лапчăк ункă.

Капăша пĕрлĕхлĕ курма тата унăн пайĕсене палăртма хăнăхтарасси. Пайсем тăрăх капăшне тавçăрасси, пайсенчен капăш пуçтарасси, капăшри çитмен пайсене ăнкарасси.

Капăшсене куç виçипе танлаштарасси, вĕсем хăш пайĕсемпе пĕр пеккине е пĕр-пĕринчен уйăрлса тăнине асăрхама хăнăхтарасси. Лап выртакан (горизонтальная), чăнкă

анакан (вертикальная) йерсемпе паллаштарасси, вĕсене тетрадьре тупасси. Хăш-пĕр йĕрсен ячĕсемпе паллаштарасси: чалăш йĕр (косая линия), кукăр-макăр йĕр (кривая линия) т.ыт.те.

Тĕрлĕ йĕре, капăшсене, эрешсене, саспаллисен пайĕсене сывлăшра евĕрлесси, йĕрлесси. Çырса пĕтермен йĕрсемпе капăшсене вĕçлесси, сăрласси.

Уç л ă х е н ĕ с е м: сылтăм, сулахай, ум, хыç, аял, çӳл, мал, кай,çум. Япаласен, капăшсен уçлăхри вырăнне курма, сăмахпа палăртма пĕлесси.

Итлев тата калу хăнăхăвĕсем. Аслисем, тантăшĕсем каланине, вуланине итлеме-илтме хăнăхтарасси: итлеме хатĕрленесси, малтан пуçласа вĕçне çитиччен пӳлмесĕр, каланине ăш пиллĕн йышăнса итлесси. Илтнине ăнланма, астуса юлма тăрăшасси.

Çыхăнуллă каласа пама, текст калăплама вĕрентесси. Текст теми, сюжечĕ - ĕç мĕнле пуçланать, мĕн хыççăн мĕн пулса иртет, мĕнле вĕçленет. Сăмах кам е мĕн çинчен пырать.

Итлеме, çыхăнуллă каласа пама вĕрентнĕ май ачасен сăмах йышне пуянлатасси, сăмахсен пĕлтерĕшне тĕрĕсрех, тарăнрах чухлама, вĕсен грамматика формисене тума, пуплевре вĕсемпе вырăнлă усă курма, тĕрлĕ тытăмлă предложенисене кĕртсе вĕсене пĕр-пĕринпе çыхăнтарма хăнăхтарасси.

**САСПАЛЛИСЕМ ВĔРЕННĔ ТАПХĂР (123 сехет)**

**Вулама-çырма вĕрентесси**

Тăван чĕлхери тĕп сасăсем, вĕсене уйăрасси, çырура палăртасси. Кĕнекере тата ал çырăвĕнче усă куракан саспаллисем, вĕсен пĕлтерĕшĕсем.

Вĕреннĕ саспаллисене тĕрĕс çырма, çырура пĕр-пĕринпе çыхăнтарма, тĕрлĕ йышши - уçă, тӳнтер, тӳрĕ сыпăкра, сăмахра, предложенире вулама хăнăхтарасси.

Хытă уçă тата хытă хупă сасăсем. Аа, Уу, Ăă, Нн, Лл, Мм, Тт, Пп, Шщ Рр, Ыы, Вв, Хх саспаллисем.Вĕсене çырасси, хытă сыпăкра, сăмахра вуласси. Тӳнтер тата тӳрĕ сыпăксене вулас вăрттăнлăх.

Çемçе уçă тата хупă сасăсем. Ии, Ее (э], Ĕĕ, Сс, Кк, Ӳӳ, Çç, Чч саспаллисем, вĕсене çырасси. Позициллĕ вулав. Хытă, çемçе сыпăксем, сăмахсем.Хупă сасса палăртакан саспаллин пĕлтерĕшĕ вăл мĕнле сыпăкра тăнинчен килни. Хытăлăх/çемçелĕх енчен мăшăрлă сыпăксене, сăмахсене танлаштарса вуласси, саспаллисенчен пухасси, пичетлесси.

Çемçелĕх палли (ь). Хутăш сыпăксем, сăмахсем: çемçе хупă сасăсене палăртмалли мелсене сăнасси. Тăван чĕлхери [й] сасса, ăна уйăрасси, палăртасси.

Йй саспаллисем. Юю, Ян, Ее; саспаллисем сыпăка та, пĕр сасса та пĕлтерни.

Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсенче тĕл пулакан сасăсем, вĕсене уйăрасси, тĕрĕс каласси. 0о, Ёё,Бб, Гг, Дц, Зз, Жж, Фф, Цц, Щщ саспаллисем, уйăракан паллăсем (ь, ъ).

Сăмахсене тăстарса, сыпăксене сыпăнтарса вулама вĕрентесси.

Сасă тишкерĕвĕ тунă сăмахсене хатĕр саспаллисемпе сыпăксенчен пухасси, класс хăми çине пичетлесси, вуласси, евĕрлесе çырасси.

Уйрăм сăмахсене, ансат предложенисене тата пысăках мар текстсене тĕрĕс, ăнланса, пĕр тикĕс (йывăр сăмахсене сыпăкăн пайласа), тĕрĕс пусăмласа вуласси, вуланине ăнланасси, ыйтусене хуравласси. Вулав хăвăртлăхĕ - минутра 12-15 сăмах.

Вуланă чухне предложенисем тата предложенири пĕр йышши членсем хушшинче чарăну тăвасси. Предложение, вĕçĕнчи чарăну паллине кура, тивĕçлĕ интонаципе вуласси.

Ал çырăвĕнчен, пичетленĕ текстран сăмахсем, предложенисем (малтан вĕсене сасă тата саспалли тишкерĕвĕ тунă хыççăн, кайран харпăр хăй тĕллĕн çырса илесси. Çырнине кĕнеке е класс хăми çинчи текстпа танлаштарса, сыпăкăн-сыпăкăн вуласа тĕрĕслесси

Ансат сăмахсене, 2-3 сăмахран тăракан предложенисене каланă тăрăх уйăрасси.

Предложени пуçламăшĕнчи сăмаха, çын ячĕпе хушаматне пысăкран пуçласа çырасси. Предложени вĕçне чарăну палли лартасси.

Çыру гигиенин правилисене пĕлесси.

**Пуплеве аталантарасси**

**Пуплевĕн сасă культури**. Харпăр хăйĕн тата урăх çыннăн пуплевне тимлеме, итленине асăмлама хăнăхтарасси. Калаçу хăнăхăвĕсене лайăхлатасси: васкамасăр, ирĕккĕн (тытăнчăксăр, пÿлĕнсе тăмасăр), вăтам хăвăртлăхпа, сасă хăпартмасăр, уçăмлăн калаçма, калаçнă май тĕрĕс сывлăш çавăрма, интонаци кирлĕ пек улăштарма вĕрентесси.

Пуплеври сасăсене илтес, калас пултарулăха лайăхлатасси: тăван чĕлхери тĕп сасăсене уйăрма, вĕсене уйрăмшарăн тата пуплевре тĕрĕс каламалли (орфоэпи) виçесене пăхăнса калама хăнăхтарасси.

Пуплеври сасăсене тĕрĕс илтме, сăмахсене, предложенисемпе вĕсен майлашăвĕсене çăмăллăн ăнкарма, шухăша хăвăрт ăнланма хăнăхтарасси. Уйрăм ачасен пуплев кăлтăкĕсене юсасси.

**С ă м а х**. Вĕренекенсем усă куракан сăмах йышне ÿстересси. Япаласемпе пулăмсен ячĕсене, вĕсен паллине, ĕçне пĕлтерекен сăмахсене литература чĕлхинчи пек калама вĕрентесси.

Япаласене вĕсен тĕп паллисем тăрăх ушкăнлама, пĕр-пĕринчен уйăрса илме, япала ушкăнне пĕр сăмахпа пĕтĕмлетме (ят пама) хăнăхтарасси.

Сăмах пĕлтерĕшне тĕплĕнрех ăнланасси. Сăмахсен пулăв çыхăнăвĕсене асăрхаса ăнкарасси.

Шухăша тĕрĕс уçса пама кирлĕ сăмаха хăвăрт тупма, ăна ытти сăмахсемпе тĕрĕс çыхăнтарма, сăмахсен грамматика формисемпе ырăнлă усă курма, пĕр шухăша тĕрлĕ майпа палăртма вĕрентесси.

Ансат тĕслĕхсемпе усă курса сăмах нумай пĕлтерĕшлĕ пулма пултарнипе, омонимсемпе тата синонимсемпе (терминĕсене асăнмасăр) паллаштарасси.

Вырăнти калаçупа литература чĕлхин уйрăмлăхĕсене уяма хистесси.

Пуплеве аталантармалли уроксем эрнере пĕрре пулмалла. Ку уроксенче те хушма вулавпа çыру хăнăхтарăвĕсем ирттермелле, анчах тĕп вырăнта пуплеве аталантармалли ĕçсем тăмалла.

Сăмахсен грамматика формисемпе усă курасси.

Литература чĕлхинче йышăннă грамматика формисене ăнланма, вĕсемпе тĕрĕс усă курма вĕрентесси. Çав шутра: япала ячĕсен, ылмашсен ÿкĕм тата хисеп формисем, глаголăн ытларах тĕл пулакан (хальхи, пĕрре иртнĕ, пулас) вăхăт формисем, вĕсен хирĕçлев, пултараслăх, пултараймаслăх аспекчĕсем (терминсене асăнмасăр).

**Сăмах майлашăвĕ**. Япалан камăнлăхне палăртасси. Тăванлăх терминĕсен сăпат формисем. «Сăпат ылмашĕ е тулли пĕлтерĕшлĕ япала ячĕ + пулăшу пĕлтерĕшлĕ япала ячĕ» калăплă сăмах майлашăвĕсен тăтăшлă ÿкĕм формисемпе (манăн патăмра, санăн патăнта т.ыт.те) пуплевре усă курасси.

**Предложени**. Тытăмĕпе (хутсăр, хутлă) тата калас тĕллевне кура (калуллă, ыйтуллă, хистевлĕ) тĕрлĕ предложени калăпласси. Пуçланă предложенисене вĕçлеме, ансăррисене анлăлатма пĕлесси. Пĕр шухăшах тĕрлĕ предложенипе е вĕсен çыххипе палăртасси. Предложенири сăмахсен йĕркине сăнама, вĕсене тĕрĕс çыхăнтарма хăнăхтарасси.

**Çыхăнуллă пуплев** . Пуплев хăнăхăвĕсене малалла аталантарасси: тимлесе итлеме, асăмлама, çыхăнуллă каласа пама, вĕрентекен ыйтăвĕсене тĕрĕс, уçăмлăн хуравлама, пуплевре предложенин тĕрлĕ тĕсĕпе усă курма хăнăхтарасси. Итленĕ е вулавнă калавсем, юмахсем тăрăх хăйсен шухăшне каласа пама вĕрентесси.

Тăван литература чĕлхине ăнланма, унăн фонетика системипе, сăмах пуянлăхĕпе, морфологи тата синтаксис мелĕсемпе пуплевре тĕрĕс усă курма, курни-илтни çинчен çыхăнуллă каласа пама вĕрентесси. Юлташĕсен хуравĕсене, каласа панине ырă кăмăлпа итлеме-тимлеме хăнăхтарасси.

Калавсемпе юмахсем, диалогсем, сăвăсем итлесси-тăнласси, асăмласси (учитель вуласа е каласа панине, магнитофон ленти çине çырса илнине, ача-пăча валли хатĕрленĕ теле- тата

радиокăларăмсене).

Пысăках мар юмахсемпе калавсене аса илесси, вĕсене уйрăм пайсене пăтраштармасăр, сиктерсе хăвармасăр каласа парасси (хăйсем тĕллĕн е вĕрентекен ыйтăвĕсем тăрăх).

Вуланă предложенисем, текстсем тăрăх ыйтсан хуравлама, текста, унăн уйрăм пайĕсене ят пама пĕлесси.

Уйрăм темăпа çыхăннă темиçе ӳкерчĕк тăрăх предложенисем, çыхăнуллă пĕчĕк калавсем тăвасси.

Пуçланă калава вĕçлесси, вĕçне илтнипе калавăн пуçламăшне шутласа тупасси. Пулни-иртни çинчен вуланипе пĕр евĕрлĕрех каласа парасси.

Çут çанталăкри улшăнусем çинчен, экскурсире, библиотекăра, ытти общеcтвăлла вырăнта курни-илтни çинчен çыхăнуллă калама хăнăхтарасси.

**Çырасси тата пуплеве аталантарасси**

Маларах вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси. Сăмаха сыпăкласси, пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси.

Çырас ăсталăха лайăхлатасси. Саспаллисен ĕлкине тĕрĕс тăвас, вĕсене пĕр-пĕринпе çыхăнтарас хăнăхăва çирĕплетесси. Саспаллисене, сыпăксене, сăмахсене тата кĕске предложенисене пĕр хăвăртлăхпа (харăс, шутласа) çырасси. Çыру гигиенине çирĕп уяма хăнăхтарасси.

Сăмах мĕнле сасăсенчен тăнине, вĕсене çырура хăш саспаллисемпе палăртмаллине чухлама, сиктерсе хăварнă саспаллисене тавçăрма, пăтраштарнă сыпăксенчен сăмахсем, сăмахсенчен предложенисем йĕркелесе çырма вĕрентесси.

Пысăках мар текста кĕнеке е класс хăми çинчен пăхса çырма, çырнине тĕрĕслеме хăнăхтарасси.

Предложенисене, пысăках мар (2-3 кĕске предложенирен тăракан) текста итлесе е вуласа çырасси.

Итлевпе калу хăнăхăвĕсене малалла аталантарасси

Пĕр-пĕр темăпа (тĕслĕхрен, ашшĕ-амăшĕ, шкул, ачасен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен), ӳкерчĕке сăнаса, ӳкерчĕксен серийĕсем тăрăх, пурнăçра курни-илтнине аса илсе вĕрентекен ыйтăвĕсемпе кăтартăвĕсем çине тĕревленсе пысăках мар калавсем тутарасси.

Вуланине е итленине аса илсе, вĕрентекен пулăшса пынипе ыйтусене хуравласси, çыхăнуллăн каласа парасси.

2 класс (102 сех)

**Алфавит**. Саспаллисен ячĕсем тата йĕрки. Уçă тата хупă сасăсем. Хытă тата çемçе сасăсем.

Пĕр-пĕр саспаллипе пуçланакан сăмахсене словарьте шыраса тупма вĕрентесси.

Сăмахсене алфавит йĕркипе вырнаçтарма хăнăхтарасси.

**Япалана пĕлтерекен сăмахсем.** Вĕсене кам? Тата мĕн? ыйтусем тăрăх тупасси.

**Япала ĕçне пĕлтерекен сăмахсем.** Вĕсене мĕн тăвать? Мĕн тăвĕ? Мĕн турĕ? Ыйтусем тăрăх тупасси.

**Япалан тата унăн ĕçĕн паллине пĕлтерекен сăмахсем.** Вĕсене мĕнле? ыйту тăрăх тупасси.

**Сăмахсене вĕсен пĕлтерĕшĕсене кура ушкăнласси.** Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсем, çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсем.

**Лексикăпа тематика ушкăнĕсем.** Тĕс ячĕсем, çынна хаклакан сăмахсем.

**Предложени.** Пуплеври предложенисене уйăрасси. Предложенин тĕп тата кĕçĕн членĕсем. Тĕрлĕ тытăмлă предложенисем калăплама хăхтарасси. Вĕсене анлăлатасси.

**Пунктуаци.** Предложени вӗҫне пăнчă, ыйту тата кăшкăру палли лартасси.
**Орфографи.** Хытă уҫă сасăллă сыпăк е сăмах вӗҫӗнчи ҫемҫе сасăсене ҫемҫелӗх палли лартса палăртни. Уйăракан ҫемҫелӗх палли ҫырасси. Вăрăм хупă сасса икӗ пӗр пек саспаллипе палăртасси( ăру-тăванлăх сăмахӗсенче, ҫулталăк вăхăчӗсен ячӗсенче, хальхи вăхăтри нумайлă хисепри 3- мӗш сăпатри глагол формисенче). Сăмаха пӗр йӗркерен тепӗр йӗркене куҫарасси. Ҫын ячӗпе хушаматне тата ашшӗ ятне, выльăхсемпе чӗр чунсен уйрăм ячӗсене, хула, ял, урам, юхан шыв ячӗсене пысăк саспаллирен пуҫласа ҫырасси. Вырăс чӗлхинчен йышăннă хăш-пӗр сăмахсене вырăс чӗлхинчи пекех ҫырасси.

3 класс

**Пуплеве пур енлӗн аталантарнă май чӗлхене ансат тишкерме, чӗлхе ăслăлăхӗн терминӗсемпе усă курма вӗрентесси.(85 сехет)**
